# Çын япалисене кăмăлпа йышăнаççĕ

### Ывăлĕсене те, хайсене те юрăхлă

Красноармейски салинче пурăнакан Станиславпа Мария Андреевсен ачисем куç умĕнчен çитĕнеççĕ, вăй илеççĕ. Вĕсене пĕр вĕçĕм урăх çи-пуç кирлĕ. Çĕннине туянма вара тăкаклă. Çитменнине, çамрăк мăшăр килте юсав ĕçĕсем пуçланă. Укçа-тенкĕ çитсе пымасан мĕн тумалла-ха?

Красноармейскинчи халăха социаллă пулăшупа тивĕçтерекен центр çумĕнче «Эпир пĕрле» япала йышăнакан тата валеçекен пункт ĕçлени чылайăшĕн укçине перекетлеме май парать. Мария Андреева та çак пулăшупа кăмăллă.

Хальхинче хĕрарăм кĕçĕн ывăлĕ валли ăшă çи-пуç суйларĕ. Ку тумтирпе пĕчĕкскерне хĕллехи сивĕ те хăратмĕ. Хăйĕн валли те килĕшӳллĕ пушмак тупăнчĕ. Тем тесен те, япаласем айккинчен çĕнĕ пекех курăнаççĕ.

Интернат шкулта вĕреннĕ Мария Андреевăна патшалăх хваттерпе тивĕçтернĕ. Халĕ çамрăк хĕрарăм – декрет отпускĕнче. Мăшăрĕ строительство организацийĕнче вахта мелĕпе ĕçлет, инçе çула тухса çӳрет.

Марийăна çывăх çыннисен хӳттинче çитĕнме пӳрмен. Пĕчĕк хĕрне амăшĕ пăхман. 5-мĕш класа çитиччен ашшĕн

«Эпир пĕрле» пункт ĕçлени çинчен районти опека пайĕн ĕçченĕсем каланăăна. Унтанпа çамрăк хĕрарăма кирлĕ нумай хатĕрпе тивĕçтернĕ. Çын тăхăннине те тиркемест Мария. Ара, çав япалана çуса тасатнă, утюгпа якатнă. Хăш чухне вара çĕнни те лекет. Ăна тăхăнма та ĕлкĕреймен. Лавккаран илнĕренпе вăхăт сахал иртнĕ-и, нумай-и – çи-пуçа ятарлă пункта леçнĕ.

са ашшĕ-амăшĕн килĕнчен вĕçсе тухнă. Пĕри – çĕвĕçе, тепри строителе вĕренме кĕнĕ. Иккĕшĕ шкулта пĕлӳ илеççĕ. Тăваттăшĕ – килте. Ача сачĕ аякра пулнăран амăшĕ çумĕнче аталанаççĕ вĕсем.

«Качча тухсан чылай вăхăт хырăм юлмарĕ. Ун чухне Турăран пулăшу ыйтрăмăр. Çакăн хыççăн Пӳлĕхçĕ пĕр пепке хыççăн теприне парнелерĕ.



Автор сăн ӳкерчĕкĕ.

не калать. «Эпир пĕрле» пунктра пухăнакан хатĕр-хĕтĕре тĕпренчĕкĕсем килте вылява, урамра çӳреме тăхăнаççĕ. Шкула кайма юрăхлă тумтир лекнишĕн те савăнать пысăк çемье.

### Пĕрле – çăмăлрах

Красноармейскинчи халăха социаллă пулăшупа тивĕçтерекен центр çĕнĕ вĕренӳ çулĕ тĕлне йĕркелекен ыр кăмăллăх акцийĕ çинчен çырмасăр ирттеймĕн. Кăçал, тĕслĕхрен, 36 çемьери 75 ачана канцелярии таварĕпе, шкул çи-пуçĕпе тивĕçтернĕ.

Красноармейскинчи халăха социаллă пулăшупа тивĕçтерекен центрăн пуçлăхĕ Станислав Григорьев «Эпир пĕрле» пункт ĕçне сӳтсе явнă май ятарлă журналпа паллаштарчĕ. Унта мĕнле япала йышăннине, ăна кама панине çырса пыраççĕ.

Кирек хăш хатĕрĕн çĕнĕ хуçи тупăнать. Сахал тупăшлă, нумай ачаллă çемьесем, пĕччен пурăнакансем «Эпир пĕрле» пункт пулăшăвĕпе тăтăш усă кураççĕ. Япалан пĕр пайне килсĕр çынсене хӳтлĕх паракан центра та леçнине палăртса хăвармалла. Унта арçын çи-пуçне те, хĕрарăм тумтирне те хапăлласах йышăнаççĕ. Мĕнех, кăмăлтан усă курччăр.

Социаллă центрăн пай пуçлăхĕ

килĕнче ҫитĕннĕ вăл. Шкулта ĕлкĕрсе пырайманнине, килти лару-тăрăва шута илсе хĕрачана Ҫĕмĕрле районĕнчи Саланчăкри интернат шкула вырнаҫтарнă. «Тăраниччен ҫитернĕ, тăхăнтарнă, ҫуралнă кунсене хаваслă паллă тунă», – ӳпкелешмесĕр аса илет Мария Андреева. 9-мĕш класс хыҫҫăн ҫамрăк Етĕрнене ҫул тытнă. Хулари училищĕре штукатур-маляра вĕреннĕ. Унтан тăванĕ сĕннипе Сĕнтĕрвăррине ҫитнĕ. Ҫакăнти училищĕре повар-кондитер дипломне илнĕ.

Хĕр пулас мăшăрĕпе интернет усăлăхĕнче паллашнине пытармасть. Чун суйланă яш – Канаш районĕнчи йышлă ҫемьерен. Ахăртнех, пĕрремĕш тĕл пулăва мĕнешкел хытă кĕтнĕ вĕсем. Кайран ҫемье ҫавăрма, ачапăчаллă пулма ĕмĕтленнĕ. Ҫамрăксем хăйсен вăйне шанса малалла ăнтăли куҫ кĕрет. Шухăшлани пурнăҫа кĕни, паллах, хавхалантарать мăшăра.

«Упăшкапа иксĕмĕрех килте юсав ĕҫĕсем пуҫларăмăр. Пӳлĕмсене ҫĕнетрĕмĕр. Алăксене тинтерех улăштартăмăр», – хальхи ĕҫ-пуҫ тавра сăмах хускатсан палăртрĕ икĕ ача амăшĕ.

«Куллен тăхăнмалли кĕпепе курткă кăна мар, уявра саркаланса ҫӳремелли ҫӳллĕ кĕлеллĕ пушмак та панă мана», – калаҫăва тăсать Мария Андреева. Апла тăк унăн япала шыраса хăшкăлмалла мар. Хĕрарăм йăлтах пĕр ҫĕрте суйлама хăнăхнă.

«Икĕ уйăхри пепкене ятарлă хутăш ҫитеретпĕр. Вăл самаях хаклă. Унсăр пуҫне ҫитĕнекен ывăлсем валли темĕн те пĕр туянмалла», – ҫемье бюджетĕнчи кашни тенкĕ шутлине палăртать кил хуҫи арăмĕ.

Икĕ ача амăшĕ кĕҫĕннине ача садне вырнаҫтарсанах ĕҫе тухасшăн. Упăшкипе амăшĕн пĕрлехи тупăшĕ ура ҫинче ҫирĕп тăма май парĕ.

Мария Андреева пĕччен пурăнакан ашшĕне пулăшнине палăртать. Ара, кил таврашĕнче ĕҫ сахал-и? Ăна хĕрĕн тĕревĕ кирлĕ. Амăшĕпе вара сыхăну тахҫанах татăлнă. Ҫут тĕнче кăтартнă хĕрарăмпа хĕрĕ халь тин пĕр чĕлхе тупасси иккĕленӳллĕ.

## Килех леҫеҫҫĕ

Пайсупин ялĕнчи Кондратьевсем 8 ача ҫуратнă. Аслисем ҫунат хуш-

Эпĕ варта тĕвĕленнĕ кашни пепкене кун ҫути кăтартма тĕв турăм», – чунне уҫрĕ чăваш хĕрарăмĕ пысăк ҫемье тавра калаҫу пуҫарсан.

«Эпир пĕрле» пункт пулăшăвĕпе 7-8 ҫул каяллах усă курма пуҫланă ку ҫемье. Нумай ача амăшне ял администрацийĕнче ĕҫлекенсем ыр кăмăллăх акцийĕ ҫинчен каласа кăтартнă. «Хăш чухне район центрне те каймалла мар. Япаласене килех ҫитерсе параҫҫĕ», – тет Ирина Геннадьевна.

Килте туслă пурăннине, пурте пĕрпĕрне пулăшма тăрăшнине палăртатать вăл. Унăн мăшăрĕ инҫе хулана ĕҫлеме кайсан инкеке лекнĕ. Ҫӳллĕшрен ӳксе хытах суранланнăскер вырăн ҫинчен тăраймасть. Арҫынна 1-мĕш ушкăн инвалиčĕсен йышне кĕртнĕ.

«Йышлă ҫемье валли апат пĕҫерсех кун иртет пуль?» – ыйтатăп унран. «Апла мар. Пур ĕҫе пурнăҫлама та вăхăт ҫитет», – хуравлать 8 ача амăшĕ. Вăл каланă тăрăх, тĕпренчĕкĕсем апат тиркемеҫҫĕ, килти ĕҫрен пăрăнмаҫҫĕ. Аслисем ашшĕне пăхма пулăшаҫҫĕ.

Ирина Кондратьева ачисене килте тăхăнтарма нумай япала кирли-

Жанна Киселева йывăр лару-тăрăва лекнисене ача кӳми те, пепкене апатлантармалли ятарлă сĕтел те панине калать. Ҫынна хăй тĕллĕн утма йывăр тăк – туяпа тивĕҫтереҫҫĕ. Ҫакăнта пурăнакансен ырă кăмăлĕ, чăн та, вĕҫĕхĕррисĕр. Жанна Геннадьевна район центрĕнче кăна мар, ял тăрăхĕсенче те ҫакнашкал пунктсем ĕҫлени ҫине пусăм тăвать. Ҫапла майпа ытларах ҫынна пулăшма май пур.

Валентина Григорьева специалист историе аса илчĕ. 1995 ҫулта Красноармейскинчи халăха социаллă пулăшупа тивĕҫтерекен центр уҫăлсанах ырă ҫак йăлана пуҫарнă. Ун чухнех кивĕ япаласене йышăнма тытăннă. Ку ĕҫ ҫаплипех пурнăҫланнишĕн чун савăнать.

Шкул сумкки, пиншак, шăлавар, тетте, ҫăм нуски... Кирлĕ хатĕр куҫ тĕлне пуласси иккĕлентермест. «Эпир пĕрле» пункт япаласемпе тулать, унтан пушанать. Пĕр-пĕрне пулăшни, чăн та, пархатарлă. Ҫакă пурнăҫ йĕркине ҫаврăннине ырă кăмăллисен тĕслĕхĕ ҫирĕплетет.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**
**/«Чăваш хĕрарăмĕ»/.**